**Чăваш çĕрне килсе курсамăр**

Чăваш çĕрне килсе курсамăр,
Туссем, чечеклĕ çуркунне:
Чăн-чăн телей ĕшни пек капăр
Тухса вăл ларĕ куç умне.

Чăваш çĕрне килсе курсамăр
Çулла, хĕвеллĕ кунсенче:
Юлташ пек кăмăллă та сапăр
Ыталĕ ытарми тĕнче.

Чăваш çĕрне килсе курсамăр,
Туссемĕр, тулăх кĕркунне:
Мĕскер акса ӳстернĕ хамăр –
Йăлтах сĕнет уй-хир анне.

Чăваш çĕрне килсе курсамăр
Шап-шурă хĕл уявĕнче:
Пуçне таять капмар хуламăр
Хăна-вĕрлемĕр умĕнче.

*Сементер, Ю. Чăваш çĕрне килсе курсамăр : [сăвă] / Ю. Сементер // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 436.*